26-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
АПРЕЛЬ
10
ШАМАТКУН
77(6314) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Чӑваш совет искусствин ҫӗнӗ ҫитӗнӗвӗсемшӗн

Искусство халӑхшӑн пулнине, вӑл халӑха воспитани парас ӗҫре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине шута илсе, пирӗн партипе правительство совет искусствине малалла аталантарса пырасшӑн яланах ҫине тӑрса тӑрӑшнӑ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене пӑхмасӑрах, пирӗн государство искусствӑн нумай тӗрлӗ учрежденийӗсемпе организацийӗсене тытса тӑма миллионшар тенкӗ укҫа парать.

Совет государстви ҫавӑн пек тимлӗн тӑрӑшнине пула, искусство сасси хаяр вӑрҫӑ кӗрлевӗнче те путса лармарӗ. Большевикла чӑнлӑхӑн сӑмахӗ совет театрӗн сцени ҫинчен вӑрҫӑ кунӗсенче татах та витӗмлӗнрех янӑрама тытӑнчӗ. Хӑватлӑнрах кӗрлеҫҫӗ ҫапӑҫу юррисемпе маршӗсем. Чӗрӗ пурнӑҫ сӑн-сӑпачӗ, пирӗн фронтрипе тылри геройсем художниксен картинӗсене хӑюллӑн кӗреҫҫӗ. Писательсен перисем штыксемпе танлашаҫҫӗ. Үсет, аталанать совет искусстви, вӑл пирӗн халӑха татах та хаяртарах ҫапӑҫава чӗнет. Искусствӑпа литературӑн вуншар работникӗсем хӑйсен чаплӑ ӗҫӗсемшӗн правительствӑн пысӑк наградисене— Сталинла премисем илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Пӗтӗм совет культурипе пӗрлех чӑваш халӑхӗн искусстви те совет влаҫӗн ҫулӗсенче пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ. Паян пирӗн республикӑри ӗҫҫыннисем Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнине паллӑ тӑваҫҫӗ.

Совет влаҫӗпе пӗрле, граждӑн вӑрҫи ҫулӑмӗнче ҫуралнӑ чӑваш театрӗ Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче пултаруллӑн аталанса чечекленсе пычӗ. Театр сцени ҫинче чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ-хӗрӗсенчен артистсен паха кадрӗсем ӳссе ҫитӗнчӗҫ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн паян пичетленсе тухакан Указӗсем ҫав ҫитӗнӳсене уҫҫӑн палӑртаҫҫӗ. РСФСР-ӗн тава тивӗҫлӗ артистне Борис Алексеевич Алексеева Чӑваш республикин халӑх артисчӗн ятне панӑ. Чӑвашсен Государство Академи театрӗн артисчӗсем—Л. Ф. Семенов, А. К. Ургалкин, Т. Н. Петрова, Э. А. Кронберг, М. М. Тихонова юлташсем Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗҫлӗ артисчӗн ячӗсене илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ. Театрӑн ӗҫӗнче уйрӑмах палӑрнӑ 15 юлташа Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине памалла тунӑ, вӗсем хушшинче В. Алагер, А. Кӑлган, Я. Ухсай драматургсем, А. Григорова, А. Долгова, М. Иванова, Г. Фадеев, Е. Шорникова артистсем т. ыт. те. Ҫакӑ вӑл пирӗн правительство халӑх искусствине аталантарассишӗн тӑрӑшнине татах та тепӗр хут кӑтартса парать.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче Чӑваш республикинчи искусство учрежденийӗсемпе организацийӗсем чылай ҫитӗнӳсем турӗҫ. Академи театрӗнчи чӑваш тата вырӑс коллективӗсем республикӑри мӗнпур район центрӗсенче тата 500 ытла колхозра пулса 600 ытла спектакльсемпе концертсем панӑ, шефа илнӗ госпитальсемпе ҫар чаҫӗсенче 243 концертпа спектакль лартнӑ. Ҫавӑн пекех чӑвашсен юрӑпа ташӑ ансамблӗ те пысӑк ӗҫсем тунӑ, кӑҫалхи февраль уйӑхӗнчен пуҫласа ансамбль фронтри боецсемпе командирсем хушшинче ӗҫлет. Кунсӑр пуҫне вырӑссен драмӑпа комеди театрӗ 1942 ҫулта 219 спектакль лартса панӑ, шефа илнӗ госпитальсемпе чугунҫул ҫинче ӗҫлекенсем хушшинче 125 спектакльпе концерт туса ирттернӗ, ҫав спектакльсемпе концертсене пӗтӗмпе 150 пин ҫын ытла курнӑ.

Чӑваш художникӗсемпе композиторӗсем те, хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек, урӑхлатса ҫӗнетсе, пысӑк утӑмсем турӗҫ. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци 25 ҫул тултарнӑ тӗле туса ирттернӗ картинӑсен выставки пирӗн художниксем пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗр шухӑшкӑмӑлпа пурӑннине кӑтартса пачӗ. Композиторсем оборона темисемпе 70 ытла юрӑ ҫырнӑ.

Анчах ҫакӑнпа пӗрлех искусство ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем те пур-ха. Искусство ӗҫне ертсе пыракансенчен хӑшпӗр ҫынсем хӑйсен тивӗҫлӗхне тӗрӗс мар ӑнланса, вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех театрпа музыка тата художество училищисен, музыка шкулӗн ӗҫӗсене чарса лартрӗҫ. Чӑвашсен филармонийӗпе художествӑллӑ галлерея, ҫамрӑксен театрӗ, колхоз театрӗсем ӗҫлеме пӑрахрӗҫ. Ҫакӑ вӑл искусствӑна малалла аталантарас, ӗҫҫыннисене художествӑллӑ-политикӑллӑ воспитани парас ӗҫре сахал мар, чӑрмав кӳчӗ.

Ҫавӑн пекех ку чухнехи вӑхӑта тивӗҫлӗ оригиналлӑ драматургие аталантарас ӗҫре те чылай ҫитменлӗхсем палӑраҫҫӗ. Театр халлӗхе чӑваш драматургӗсемпе, уйрӑмах фронтовик-писательсемпе, ҫителӗксӗр ҫыхӑнса ӗҫлет. Ҫак ӗҫ ҫине Чӑваш АССР ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен управленийӗпе писательсен союзӗн правленийӗ те кирлӗ пек ҫаврӑнса пӑхман-ха.

Вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа халӑх пултарулӑхне ертсе пырас ӗҫе вӑйсӑрлатни сисӗнет. Халиччен хастаррӑн ӗҫлесе пынӑ пултарулӑх кружокӗсем чылайӗшӗсем саланса кайнӑ.

Искусство ӗҫӗсен управленийӗн республикӑри искусство учрежденийӗсемпе организацийӗсене ертсе пырас ӗҫе тӗпренех вӑйлатмалла. Театрӑн юбилейне ирттернӗ май унӑн ӗҫӗнчи ҫитӗнӳсемпе ҫитменлӗхсене палӑртса, малашне творчество енӗпе татах та пысӑкрах задачӑсем лартмалла. Оригиналлӑ драматургие аталантарас ӗҫ ҫине уйрӑмах тимлӗн ҫаврӑнса пӑхмалла, театрӑн драматургсемпе, фронтовик-писательсемпе таччӑнрах ҫыхӑнса ӗҫлемелле. Ӗҫлеме чарӑннӑ искусство учрежденийӗсемпе организацийӗсене ура ҫине тӑратассишӗн, халӑх пултарулӑх кружокӗсен ӗҫне чӗртсе ярассишӗн ҫине тӑрса тӑрӑшмалла.

Вӑрҫӑ кунӗсенче искусствӑпа литература работникӗсем халӑха шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшӗнчен хӗҫпӑшаллантарса пыма тивӗҫлӗ. Совет искусствин чӑнлӑхлӑ та витӗмлӗ сӑмахӗпе халӑха фронтра та, тылра та паттӑр ӗҫсем тума, ылханлӑ нимӗҫ захватчикӗсене хаяррӑн аркатса пыма хавхалантарасси—искусство работникӗсен паянхи тӗп задачи пулса тӑрать. Ҫавна вӗсем тивӗҫлипе пурнӑҫа кӗртӗҫ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑвашсен Государство Академи театрӗн артистне Борис Алексеевич Алексеева Чӑваш АССР халӑх артисчӗн ятне парасси ҫинчен

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнине палӑртса, сцена искусствинче питӗ палӑрса тӑракан паха ӗҫсем тунӑшӑн Чӑвашсен Государство Академи театрӗн артистне—Борис Алексеевич Алексеева Чӑваш АССР Халӑх артисчӗн ятне парас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи апрелӗн 9-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑвашсен Государство Академи театрӗн артисчӗсене Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗҫлӗ артисчӗн ятне парасси ҫинчен

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнине палӑртса, сцена искусствинче питӗ палӑрса тӑракан ӑнӑҫусем тунӑшӑн Чӑвашсен Государство Академи театрӗн ҫак артисчӗсене Чӑваш АССР-ӗн тава тивӗҫлӗ артисчӗн ятне парас:

1. Леонид Федорович **Семенова.**
2. Алексей Константинович **Ургалкина.**
3. Татьяна Николаевна **Петровӑна.**
4. Эльвира Анисовна **Кронберга.**
5. Мария Матвеевна **Тихоновӑна.**

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи апрелӗн 9-мӗшӗ.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

Чӑвашсен Государство Академи театрӗн уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑласси ҫинчен

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнине палӑртса, театр искусствинче тунӑ ӑнӑҫусемшӗн Чӑвашсен Государство Академи театрӗн уйрӑмах палӑрнӑ ҫак работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑлас:

1. Василий Осипович **Алагера** — драматурга.
2. Борис Аркадьевич **Архангельские**—главнӑй художника.
3. Анна Яковлевна **Григоровӑна**—артисткӑна.
4. Анфиса Андреевна **Долговӑна**—артисткӑна.
5. Мария Петровна **Ивановӑна** — артисткӑна.
6. Александр Димитриевич **Кӑлгана**—драматурга, Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи Искусство ӗҫӗсен управленийӗн начальникне.
7. Николай Нилович **Касаткина** — прикмахер-гримера.
8. Анисим Григорьевич **Лихтенштейна**—артиста.
9. Григорий Владимирович **Мордковича**—директора.
10. Анна Мартеевна **Маркеловӑна**—старши билетера.
11. Тихон Николаевич **Плотникова**—директор заместительне.
12. Леонид Никанорович **Родионова**—художествӑллӑ руководителе.
13. Яков Гаврилович **Ухсая**—драматурга.
14. Георгий Фадеевич **Фадеева** — артиста.
15. Елена Васильевна **Шорниковӑна**—артисткӑна.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули, 1943 ҫулхи апрелӗн 9-мӗшӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Вырӑнти топливӑна хатӗрлесе турттарас тӗлӗшпе пыракан ӑмӑртӑвӑн тата вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе промысла артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн март уйӑхӗнчи итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ вырӑнти топливӑна хатӗрлесе турттарас тӗлӗшпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн, ҫавӑн пекех тата республикӑри вырӑнти промышленность предприятийӗсемпе промысла артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1943 ҫулхи март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

Вырӑнти топливӑна хатӗрлесе турттарас енӗпе

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне, Кӳкеҫ райлесзагӗнчен илсе, **Тӑвай леспромхозне** пама (директорӗ Кириллов, райсовет исполкомӗн председателӗ Федоров) тата ӗҫре уйрӑмах палӑрнӑ работниксене премилеме леспромхоза 10.000 тенкӗ укҫа пама, Федоровпа Кириллов юлташсене уйӑхри ӗҫ укҫи парса премилеме йышӑннӑ.

Красноармейски райлесзага (директорӗ Вишнев, райсовет исполкомӗн председателӗ Александров) 5.000 тенкӗ премии памалла тунӑ.

Кӳкеҫ райлесзагне (директорӗ Федоров, райсовет исполкомӗн председателӗ Миронов) — 5.000 тенкӗ премии памалла тунӑ.

Вырӑнти промышленность енӗпе

Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне, Сӗнтӗрвӑрри райпромкомбинатӗнчен илсе, **Вӑрнар райпромкомбинатне** пама (управляющийӗ Кузнецов, райсовет исполкомӗн председателӗ Никитин, тата леспромхоза 10.000 тенкӗ укҫа пама, ҫак укҫаран Ниткин юлташа 1.000 тенкӗ парса премилеме йышӑннӑ.

Етӗрне райпромкомбинатне (управляющийӗ Никитин, райсовет исполкомӗн председателӗн вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Губерман) 7.000 тенкӗ премии пама, ҫав укҫаран Губерман юлташа 1.000 тенкӗ парса премилеме йышӑннӑ.

Куславкка райпромкомбинатне (управляющийӗ Ефимов, райсовет исполкомӗн председателӗ Прытченков)—7.000 тенкӗ премии пама;

Шӑхасан райпромкомбинатне (управляющийӗ Платонов, райсовет исполкомӗн председателӗ Скворцов) —4.000 тенкӗ премии пама;

Канаш хулинчи промкомбината (управляющийӗ Шлапак, хула совет исполкомӗн председателӗн вырӑнти промышленность енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Антонов) — 4.000 тенкӗ премии пама йышӑннӑ.

Совнарком март уйӑхӗнче Ишлей, Калинино, Комсомольски, Хӗрлӗ Чутай, Сӗнтӗрвӑрри, Октябрьски, Первомайски, Советски, Ҫӗрпӳ, Чкаловски районӗсенчи тата Шупашкар хулинчи промкомбинатсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Ҫакӑнпа пӗрлех Совнарком март уйӑхӗнче Элӗк, Йӗпреҫ, Кувакино, Сӗнтӗр, Красноармейски, Вӑрмар, Элӗк тата Тӑвай райпромкомбиначӗсем ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртнӑ.

Совнарком ҫакна палӑртнӑ: райпромкомбинатсем, март уйӑхӗнче пӗтӗм продукци кӑларас енӗпе ӗҫе кӑштах лайӑхлатнӑ пулин те, сирӗплетсе панӑ ассортиментсем тӑрӑх продукци туса кӑлармалли плана пурнӑҫа кӗртеймен.

Парне янӑшӑн чӑваш ӗҫҫыннисене литовецсем тав тӑваҫҫӗ

Элӗк, Ҫӗмӗрле, Советски, Етӗрне тата Хӗрлӗ Чутай районӗсенчи ӗҫҫыннисем, ҫавӑн пекех тата Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективӗ Хӗрлӗ Ҫар XXV ҫул тултарнӑ уяв умӗн гитлеровецсемпе хаяррӑн кӗрешсе вӗсене пӗтерсе пыракан литовецсем валли уяв парнисем ярса панӑччӗ.

Нумай пулмасть Литва ВКП(б) Центральный Комитечӗн секретарӗ А. Снечкус юлташ ВКП(б) Чӑваш Обкомне ҫыру янӑ.

«Дивизири боецсем, командирсем тата политработниксем,—тенӗ ҫырура,—парне янӑ районсенчи ӗҫҫыннисене Хӗрлӗ Ҫаршӑн тӑрӑшнӑшӑн пысӑк тав тӑваҫҫӗ, хӑйсем Ленин—Сталин ялавӗ айӗнче кӗрешсе тӑван ҫӗршыва ирӗке кӑларассишӗн, совет халӑхӗсен туслӑхӗпе пӗрлӗхӗшӗн хӑйсен юнӗпе пурнӑҫне шеллемесӗр, ҫирӗппӗн те мухтавлӑн кӗрешсе тискер фашистсене пӗтерсе пыни ҫинчен пӗлтерме ыйтаҫҫӗ».

Снечкус юлташ ҫакӑнпа пӗрлех ҫав пилӗк районри ӗҫҫыннисене тата Ҫӗмӗрле комбиначӗн коллективне Литвари Коммунистсен (большевиксен) Партийӗн Центральный Комитечӗпе Литва ССР Совнаркомӗ тав тунине пӗлтерме ыйтнӑ.

Ҫамрӑксем хастарлӑн ӗҫлеҫҫӗ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Яманакри «Красное Сормово» колхозри 15 ҫулхи Ваня Емельянов 1942 ҫулта 248 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ. Емельянов пӗр ӗҫрен те юлман. Ҫавӑн пекех 14 ҫулхи Мария Паромонова 208 ӗҫкунӗ, Петр Степанов 198 ӗҫкунӗ, Гена Герасимов 131 ӗҫкунӗ, Александр Николаев 123 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ. Нимӗҫ вӑрӑ-хурахӗсене хирӗҫ кӗрешсе геройла вилӗмпе вилнӗ Ефремов Данилӑн 12 ҫулхи ачи 81 ӗҫкунӗ ӗҫлесе тунӑ.

С. Патфилатов.

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа килнӗ саламсем

Искусство фронтӗнче ҫирӗм пилӗк ҫул ӗҫленипе театр коллективне ырӑ сунса саламлатӑп. Малашне те творчествӑллӑ ӑнӑҫлӑхсем тума сунатӑп.

ХРАПЧЕНКО,
ССР Союзӗн Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен Комитечӗн Председателӗ.

* * *

Аслӑ Октябрь революци тивлечӗпе ҫуралнӑ Чӑвашсен Государство Академи театрӗ ҫирӗм пилӗк ҫул тултарнӑ ятпа пӗтӗм коллектива тата руководствӑна чӗререн саламласа ырӑ сунатӑп. Сирӗн театрӑн юбилейне уявлани чӑваш халӑхӗн культури чечекленнине, ленинла-сталинла наци политики ҫӗнтернине пӗлтерет. Отечественнӑй вӑрҫӑн йывӑр кунӗсенче коллектив пӗтӗм вӑя чӑваш искусствине малалла аталантарас ӗҫе хурассине шанса тӑратӑп.

БЕСПАЛОВ,
РСФСР Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен Управлении начальникӗ.

* * *

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗ Чӑвашсен Государство Академи театрӗн коллективне вӑл театр 25 ҫул тултарнӑ ятпа саламлаҫҫӗ тата ӑна хӑйӗн малашнехи ӗҫӗсенче пултаруллӑ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунаҫҫӗ.

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ ҫак 25 ҫул хушшинче чӑнчӑн художествӑллӑ чылай спектакльсем хатӗрлесе кӑтартрӗ тата чӑваш драматургийӗпе чӑвашсен театр искусствине пуҫарса ярса аталантарас тӗлӗшпе, нациллӗ ҫӗнӗ кадрсем вӗрентсе хатӗрлес тӗлӗшпе чылай пысӑк ҫитӗнӳсем турӗ; ҫакӑ вӑл Ленинпа Сталинӑн наци политикине пӗр пӑркаланмасӑр пурнӑҫа кӗртсе пынипе пулчӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ ҫакна шанса тӑраҫҫӗ: театрта ӗҫлекенсем хӑйсен мӗнпур пӗлӗвӗпе, пултарулӑхне совет халӑхӗ нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешнине кӑтартакан художествӑллӑ ҫӗнӗ спектакльсем хатӗрлесе кӑтартас ӗҫе, вырӑссен театр искусствинчи классикла наследствине вӗренсе ӑнӑҫлӑн алла илес ӗҫе, чӑваш драматургине малалла аталантарас ӗҫе, чӑвашсен театр искусствине ӳстерсе чечеклентерес ӗҫе хурӗҫ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. МАТВЕЕВ.

ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн Секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

* * *

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ театр коллективне Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнӑ ятпа саламлать тата хӑйӗн малашнехи ӗҫӗнче ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума сунать.

Пӗтӗм Союзри Коммунистсен (большевиксен) партийӗ, Сталин юлташ хӑй нациллӗ искусствӑна аталантарассишӗн ҫине тӑрса тӑрӑшнине пула, 1918 ҫулхи январӗн 27-мӗшӗнче хӑйӗн никӗсне хывнӑ чӑваш театрӗ Сталинла Конституци хӗвелӗ айӗнче чӑвашсен театр искусствине тата чӑвашсен нациллӗ драматургине ҫитӗнтерес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем турӗ. Хӑй 25 ҫул тултарнӑ тӗле чӑвашсен Государство Академи театрӗ пултарулӑх енӗпе ӳссе пыракан коллектив туса пӗтӗҫтерчӗ.

Чӑвашсен Государство Академи театрӗн коллективӗ хӑйӗн малашнехи ӗҫӗнче татах та пысӑкрах ҫитӗнӳсем тӑвӗ тесе Верховный Советӑн Президиумӗ шанса тӑрать.

Чӑваш АССР Верховный Совечӗн Президиумӗ.

* * *

ВКП(б) Шупашкар хула комитечӗпе ӗҫҫынни депутачӗсен хула совет исполкомӗ Чӑвашсен Государство Академи театрӗн коллективне театр 25 ҫул тултарнӑ ятпа хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ.

Ҫирӗм пилек ҫул хушшинче театр чӑвашсен театр искусствине аталантарас, театр валли нациллӗ кадрсем вӗрентсе ӳстерес, художествӑллӑ лайӑх постановкӑсем лартса парас тата халӑх хушшинче патриотла шухӑш-кӑмӑла сарас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ туса ирттерчӗ.

ВКП(б) горкомӗпе горсовет исполкомӗ театр коллективне творчествӑллӑ ӗҫре малашне те пысӑк ҫитӗнӳсем тума сунаҫҫӗ, нимӗҫсен фашистла оккупанчӗсене хирӗҫ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ туса пыракан пирӗн халӑхшӑн малашне театр татах та ӑнӑҫлӑнрах ӗҫлесе шанса тӑраҫҫӗ.

ВКП(б) Шупашкар горкомӗн секретарӗ РОМАНОВА.

Горсовет исполкомӗн председателӗ АНИКИН.

* * *

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен Управленийӗ Чӑвашсен Государство Академи театрӗн коллективне театр 25 ҫул тултарнӑ юбилей ячӗпе—чӑваш совет искусствин уявӗ ячӗпе хӗрӳллӗ саламлать.

Чӑваш театрӗ—пирӗн халӑха ирӗклӗ, телейлӗ пурнӑҫ панӑ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ революци тивлечӗпе ҫуралнӑ. Граждан вӑрҫи кунӗсенче чӑваш театрӗ, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсемпе командирӗсене спектакльсем кӑтартса, совет влаҫӗн тӑшманӗсене ҫӗмӗрсе тӑкма хавхалантарнӑ. Ҫав чысла йӑлана театр хӑйӗн творчествӑллӑ ӗҫӗнче яланах тытса пынӑ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче театр коллективӗ, Чӑваш республикинчи мӗнпур искусство работникӗсемпе пӗрле, хӑйӗн пӗтӗм вӑйне нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсене хирӗҫ паттӑррӑн кӗрешекен хастарлӑ Хӗрлӗ Ҫара, социализмлӑ тӑван ҫӗршыва пулӑшас ӗҫе хурать.

Театр коллективӗ хӑйӗн малашнехи ӗҫӗнче творчествӑллӑ ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тӑвӗ, тӑван ҫӗршыв умӗнчи хӑйӗн тивӗҫне чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗ тесе искусство ӗҫӗсен Управленийӗ шанса тӑрать.

Чӑваш АССР Совнаркомӗ ҫумӗнчи искусство ӗҫӗсен Управленийӗ.

* * *

Чӑваш совет писателӗсем Чӑвашсен Государство Академи театрӗн коллективне вӑл творчество ӗҫӗнче 25 ҫул хушши тухӑҫлӑн ӗҫленӗ ятпа хӗрӳллӗн саламлаҫҫӗ тата совет театрӗн искусствине малалла аталантарас ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума ырӑ сунаҫҫӗ.

Чӑваш театрӗ граждан вӑрҫи ҫулӑмӗнче ҫуралнӑ, пӗтӗм совет культурипе пӗрле Сталинла Конституцин ырӑ ҫуттинче ӳссе чечекленсе пынӑ. Хӑй ҫирӗм пилӗк ҫул тултарнине театр Отечественнӑй Аслӑ вӑрҫӑ кунӗсенче паллӑ тӑвать.

Совет халӑхӗн чи паттӑр ывӑлӗсем, аслӑ полководец Совет Союзӗн Маршалӗ Сталин юлташ ертсе пынипе, хамӑрӑн Тӑван ҫӗршывӑн чыслӑхӗпе никама пӑхӑнманлӑхне фашистла нимӗҫ захватчикӗсенчен сыхлаҫҫӗ, пирӗн ҫӗршыври мӗнпур ирӗклӗ халӑхсен пурнӑҫ прависене, нациллӗ культурӑпа искусствӑна тата литературӑпа аталантармалли правӑсене хӳтӗлеҫҫӗ.

Хаяр вӑрҫӑ кунӗсенче искусствӑпа литература работникӗсен совет халӑхне фронтра та, тылра та геройла ӗҫсем тума хавхалантармалла, фашистла ирсӗрсене хирӗҫ хаяррӑн кӗрешме, ҫав ирсӗрсене пуҫӗпех пӗтерсе тӑкма халӑха шухӑш-кӑмӑл тӗлӗшӗнчен хӗҫпӑшаллантарса пымалла. Чӑваш республикинчи искусствӑпа литература работникӗсем халӑх умӗнчи хӑйсен тивӗҫлӗхне пурнӑҫа чыслӑн кӗртӗҫ.

Сывӑ пултӑр пирӗн мухтавлӑ Тӑван ҫӗршыв тата ӑна хӳтӗлекен паттӑр Хӗрлӗ Ҫар!

Сывӑ пултӑр пире ҫӗнтерӳ уявӗ патне ертсе каякан аслӑ Сталин!

Чӑваш Совет Писателӗсен Союзӗн Правленийӗ.

* * *

Чӑвашсен Государство Академи театрӗ 25 ҫул тултарнӑ чаплӑ кун Марисен Государство театрӗн коллективӗ сире хӗрӳллӗ салам ярать тата чӑваш искусствине, форми енчен нациллӗ, ӑшчикӗ енчен социализмлӑ искусствӑна, пирӗн ҫӗнтерӳллӗ Хӗрлӗ Ҫарпа пӗрле нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешме тата вӗсене пӗтӗмпех ҫӗнтерме чӗнекен искусствӑна малалла аталанатарса пыма пӗтӗм чӗререн сунать.

Марисен Государство театрӗн дирекцийӗпе коллективӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Апрелĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Апрелĕн 8-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Баренц тинĕсĕнче пирĕн карапсем нимĕçсен 2.500 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Апрелĕн 7-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе груэсем турттарса пыракан 20 автомашининчен кая мар пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен складне сирпĕтсе янă тата тăшманăн чугунçул эшелонне аркатса тăкнă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра тăшман пехотин пĕр батальонĕ, 12 танк пулăшнипе, пирĕн позицисене атакăланă. Гитлеровецсене хирĕç пирĕн артиллерипе минометсем пеме пуçланă. Нимĕçсен боевой речĕсене арпаштарнă хыççăн пирĕн боецсем контратака туса тăшмана малтанхи позицийĕ çине ывăтса янă. Нимĕçсен 350 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă, 4 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра совет боецĕсем гитлеровецсене атакăланă та пĕр усăллă рубежа йышăнса илнĕ. Çав рубежшăн пынă çапăçура тăшман пехотин пĕр ротине çитти пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетнĕ тата çапăçуллă разведка туса пынă. Артиллерирен тата пехота хĕçпăшалĕнчен персе нимĕçсен 150 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă тата артиллерин 2 батарейине пусарнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре тăшманпа кайра-хутран перкелешсе тăнă. Артиллерин пĕр чаçĕ тăшманăн 6 дзотне аркатса тăкнă тата гитлеровецсен пĕр ротине çитти сапаласа янă. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче снайпер лейтенант Михаил Белоусов 234 нимĕç салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, старши сержант Хаид Кужматов — 159 нимĕçе, гварди красноармеецĕ Дмитрий Чечиков — 154 нимĕçе, гварди старшини Иван Петров 113 нимĕçе пĕтерсе тăкнă.

* * *

Карелпа финн партизанĕсен «Онежец», «Буревестник», «Железняк», тата «Вперед» ятлă отрячĕсем тĕплĕн разведка тунă хыççăн тăшман йышăннă халăх пурăнакан пĕр пункта сасартăк вăркăнса кĕнĕ. Пуçланса кайнă хаяр çапăçура партизансем 113 белофинна вĕлернĕ. 8 автомашина, автомобильсем юсакан мастерскоя, запаслă пайсен складне, боеприпассен складне, горючи складне тата япаласен складне çунтарса янă.

* * *

Гитлер хушнă тăрăх нимĕç авиацийĕ тĕрлĕ çĕршывсенчи мирлĕ хуласем çине сахал мар вĕçсе пырса терророла тапăннă. Гитлеровецсем историллĕ памятникĕсене, культура учрежденийĕсене, шкулсемпе больницăсене пĕтерсе пынă, хĕрарăмсемпе ачасене вĕлернĕ. Ун чухне Геринг нимĕçсене шантарса çапла каланă: Германи пĕлĕтне çирĕп хӳтĕленĕ, тăшманăн пĕр самолечĕ те нихçан та нимĕç хулисем çине вĕçсе килес çук, тенĕ. Гитлерла суеçĕ çапла мухтаннине часах тăрă шыв çине кăларнă. Совет авиацийĕ Берлинри тата Германин ытти хулисенчи çар объекчĕсем çине бомбăсем сахал мар пыра-пыра пăрахнă. Геринг мухтанса каланă пулин те, Англипе Америка авиацийĕ нимĕç хулисем çине вĕçсе пырса вăйлăн тапăнать. Халĕ ĕнтĕ нимĕç обывателĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтри салтаксем патне çыракан çырусенче самолетсем вĕçсе пырса тапăнни пирки йышăнса калаççĕ. Адольф Штупфель ефрейтор патне çырнă çырăвĕнче амăшĕ çапла калать: «...Сывлăшран тапăнасси çинчен пĕлтернисем пире канăç памаççĕ. Кашни çĕрех Хĕвеланăç Германинчи хуласем çине бомбăсем пăрахаççĕ», тет. Нимĕçсен 95-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 279-мĕш полкăн 5-мĕш ротинчи салтак Герман Поле патне çапла çыраççĕ: «Иртнĕ çĕр самолетсем тӳсме çук вăйлăн килсе тапăнчĕç. Капла ухмаха ерме пулать». Эвих салтак патне унăн амăшĕ çапла çырать: «...Дюссельдорф хулине пĕтĕмпех аркатса тăкнă. Англичансем пирĕн хула çине сывлăш торпедисем тата вут хыптаракан бомбăсем çав тери нумай пăрахрĕç...» Паллă мар салтак патне теменле Мария çапла çырать: «...Иртнĕ эрнере летчиксем Карлсруэ хулине тапăнчĕç. Вĕсем çав тери пысăк сиен кӳчĕç», тет. Обер-ефрейтор Гейнц Зауэр патне Эрна Инцмер çапла çырать: «14 кун каярах томмисем Берлинра пулса курчĕç, ăна пысăк сиен кӳчĕç. Англичансем бомбăсене шеллемерĕç вара. Елĕк пирĕншĕн вăрçă таçти инçери вăрçă пек туйăннă пулсан, халĕ вăл пирĕн кил патнех çывхарчĕ. Берлина хӳтĕлеме пултараймастпăр пулсан, пире нумай çĕр мĕн тума кирлĕ-ха», тет.

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Витебск облаçĕнчи Городок тата Сураж районĕнчи мирлĕ халăха çав тери тискеррĕн асаплантарса пĕтернĕ. Фашистла варварсем темиçе яла пĕр кил хăвармиччен çунтарса янă, темиçе пин хресчене персе пăрахнă. Нумайĕшне каторгăна илсе кайнă. Нимĕçсем çынсен алписене каялла çыхнă та конвойпа Германие хăваласа кайнă.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ ВРАЧСЕМ ЯРАÇÇĔ

Нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене 14.000 врач яраççĕ. Вĕсенчен пĕр пайĕ вырăнсене çитсе ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. (ТАСС).

ÇĔНĔ ПРЕДПРИЯТИСЕМ

Юлашки икĕ çул хушшинче Башкирире вырăнти промышленноçăн 327 çĕнĕ предприятине, мастерскойсемпе цехсене туса ĕçе янă, районсенче 30 промкомбинат тунă, вуншар çĕнĕ йышши изделисем тума вĕреннĕ. (ТАСС).

Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ

Апрелĕн 8-мĕшĕнче Шупашкар хулинчи комсомол активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Комсомолăн хулари организацийĕн задачисем çинчен пухура ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Шупашкар горкомĕн секретарĕ Чарыков юлташ доклад турĕ.

Чарыков юлташ комсомол фронтра тата тылра пысăк вырăн йышăнса тăнипе нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетсе пачĕ.

Хĕрлĕ Çар речĕсенче вуншар пин чăваш комсомолецĕсем çапăçаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ хăйсене мухтавпа витрĕç. Комсомолăн республикăри организацийĕсенче ӳссе çитĕннĕ Федот Орлов, Геннадий Габайдулин Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăчĕç, Стешов икĕ хутчен орден илчĕ, пĕр тăван Семичкинсем, Беспалов, Соколов тата ыттисем те нумайĕшĕ паттăр боецсемпе командирсем пулса тăчĕç.

Комсомолецсемпе çамрăксен вырăнĕ хуçалăхлă-политикăллă задачăсене пурнăçлана çĕрте те ӳсрĕ. Хулари предприятисенче комсомолецсемпе çамрăксен 35 фронтовой бригади ĕçлет. Çĕршер комсомолецсемпе çамрăк рабочисем ĕç нормисене чылай ирттерсе тултараççĕ. Комсомол организацийĕсем социализмлă ăмăртăва пуçарса ертсе пыраççĕ, комсомолецсем сталинла вахтăсене тăраççĕ, рационализаторла сĕнӳсем пухаççĕ.

Комсомолецсем Хĕрлĕ Çар валли хĕçпăшал тумашкăн укçа пухнă çĕре активлăн хутшăннă. Хулари комсомолецсем самолетсен «Комсомолец Чувашии» ятлă эскадрильине тумашкăн кăна 775.422 тенкĕ пухнă.

Анчах комсомолăн хулари организацийĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Комсомолăн чылай организацийĕсем йышсăр, вĕсем предприятисен тата учрежденисен ĕçне çителĕксĕр хутшăнаççĕ, предприяти ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ыйтусене парторганизацисем умне хăюсăррăн кăларса тăратаççĕ, ВКП(б) уставĕ хăйсене панă правăпа усă кураймаççĕ.

Чылай комсомол организацисенче союзри ĕçе япăхтарса янă, политикăллă воспитани ĕçне тивĕçлипе туса пымаççĕ. Çавăн пирки комсомолăн хулари организацийĕсем питех те хуллен ӳсеççĕ. Юлашки çулталăк çурă хушшинче ВЛКСМ хулари организацийĕн йышĕ чылай чакнă.

Комсомол ретне илес тĕлĕшпе ĕç халĕ те начар тăрать-ха. Комсомолăн хулари 116 организацийĕнчен юлашки виçĕ уйăх хушшинче 23 организацийĕ пачах ӳсмен.

Чарыков юлташ комсомол организацийĕсем мĕнле ĕçленине уççăн кăтартса парса, вĕсен умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ.

Чарыков юлташăн доклачĕ хыççăн пренисем пуçланчĕç. Унта Трусова, Бродоцкая, Белякова, Смирнова, Коган, Соловьева, Медведев—пурĕ 13 çын тухса калаçрĕç.

Комсомол активĕн пухăвĕ йышăннă решенире комсомолăн хулари организацийĕсенчи çитменлĕхсене пĕтермелли мерăсене палăртрĕ.

Çуркуннехи уйхир ĕçĕсем пуçланчĕç

Колхозсем клевер акаççĕ

КӐКЕÇ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсем те клевер акма тухрĕç. Районăн кăçал пурĕ 900 гектар çине клевер акса хăвармалла. Паянхи куна 119 гектар акнă. Клевер акмалли плана пурнăçа кĕртме районра вăрлăх çитет. «Дружба», «Челюскинец» колхозсем клевер акас ĕçе вĕçлерĕç. Клевер вăрлăхне вăхăтра хатĕрлесе çитермен колхозсенче халь колхозницăсем тимлесех вăрлăх шĕкĕлчеççĕ. Хăшпĕр колхозсем клевер вăрлăхне ытти кохозсенчен кивçен илчĕç.

Л. Данилов.

Уйхир ĕçне тума тĕплĕн хатĕрленнĕ

ЕТĔРНЕ, апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Кĕçĕн Хăмăркка ялсоветĕнчи «Родина» тата Тельман ячĕпе тăракан колхозсем 1943 çулхи уйхир ĕçĕсене тĕплĕн хатĕрленсе çитрĕç. Вăрлăх хатĕрлес ĕçе колхозниксем уйрăмах пысăк вырăна хунă. Çуркунне акма кирлĕ вăрлăхсене пурне те тасатса сортланă. Клевер вăррине те çителĕклĕ таран шĕкĕлчесе хатĕрленĕ. Халĕ, акă, клевер акма вăхăт çитрĕ. «Родина», Тельман ячĕпе тăракан колхозсем клевер акма тухрĕç. «Родина» колхоз клевер акмалли плана тултарчĕ.

Анчах та районра чылай колхозсен клевер вăрлăхĕ çитмест. Кĕçĕн Хăмăрккари «Парижская Коммуна» колхоз кирлĕ чухлĕ вăрлăх хатĕрлемен пирки пĕр гектар çеç акрĕ. План тăрăх тата 7 гектар акмалла. Анчах колхоз председателĕ вăрлăх тупассишĕн тăрăшмасть-ха.

П. Степанов.

Икĕ кун хушшинче 190 гектар акрĕç

СЕНТЕРВĂРРИ. апрелĕн 9-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсенче кĕрхи тырăсем çине клевер акса хăварассине масăллăн пулса пырать. Апрелĕн 7—8-мĕшсенче колхозсем пурĕ 190 гектар клевер акрĕç.

Н. Ильин.

Тырă вăрлăхĕсене тĕрĕс яровизацилер

Яровизацилеме тытăниччен вăрлăхăн тасалăхне тата шăтас пахалăхне тĕрĕслемелле. Хăма урайлĕ пӳлĕм, лейка, ала, йывăç кĕреçе, термометр, шăналăк е брезент хатĕрлесе хумалла. Вăрлăх яровизацилемелли пӳлĕме пĕр центнер вăрлăх икĕ квадратлă метр вырăн йышăнмаллине шута илсе уйăрмалла.

Тулă вăрлăхне çĕртме тунă вырăна çуркунне сӳрелеме тытăнас умĕн 1—3 талăк маларах, сĕлĕ тата урпа вăрлăхĕсене 3—5 талăк маларах яровизацилеме тытăнмалла. Яровизацилессине çак нормăсемпе тумалла:

Тырă ячĕ	13 процент нӳрĕллĕ кашни центнер тырра йĕпетме кирлĕ шыв норми	Яровизациленекен тыррăн температури	Миçе кун хушши яровизацилемелле
Çурхи тулă	31 литр	Пĕрмаях 10—12 градус	5—7
Сĕлĕ тата урпа	35 литр	малтанхи 15—20 сехет хушшинче 10–12 градус, 20 сехет хыççăн 2—5 градус.	10—14

Вăрлăхăн нӳрлĕхĕ 13 процентран ытларах пулсан, кашни ӳснĕ процент пуçне яровизацилеме кирлĕ шыв хисепĕ пĕр литр сахалтарах пулмалла. Вăрлăха виçĕ хутчен йĕпетес пулать: яровизацилеме пăхнă вăрлăха 30 сантиметр хулăмĕш сарса хунă хыççăн пĕрремĕш хут ун çине виçсе илнĕ шывăн виççĕмĕш пайне лейкăпа сапаççĕ; виçĕ сехет иртнĕ хыççăн вăрлăха йывăç кĕреçепе пăтратаççĕ; иккĕмĕш хут шыва яровизацилекен вăрлăх çине 12 сехет иртсен, виççĕмĕш хут тата 6 сехет иртсен пĕрпекшер пай сапмалла. Пăтраштарнă хыççăн шăналăкпа е брезентпа витсе хумалла, яровизацилекен вăрлăхăн температурине пĕрмаях сăнаса тăмалла.

Тырă яровизацилесси температура тата нӳрĕлĕх нормисене çирĕп пăхăнса тăрсан çеç ăнăçлăн пулма пултарать. Çӳлте кăтартнă таблицăри нормăсене тĕрĕс пурнăçламалла. Çав нормăсене пăссан тырă пĕрчисем ытлашши шăтса каяççĕ. Яровизациленĕ çурхи тулă вăрлăхĕнче шăтнă пĕрчĕсем виçĕ процентран ытла пулмалла мар, сĕлĕ тата урпа вăрлăхĕсенче пĕрчĕсем шăтса кайни пачах пулмалла мар. Вăрлăх ытла нумай шăтса кайма тытăнсан, пӳлĕме уçса уçăлтармалла, вăрлăха кĕреçепе сăвăрмалла тата çӳхерех сарса хумалла.

Яровизацилесси тата вăрлăх типсе кайнипе те пăсăлма пултарать. Çакăн пек пулма тытăнсан вăрлăха татах та йĕпетмелле.

Акмалли çĕр лаптăкĕ хатĕр пулсан, вăрлăхăн яровизациленес вăхăчĕ иртмен пулсан та, ăна акас пулать, яровизацилемелли вăхăта вĕçне çити кĕтсе тăма кирлĕ мар. Тепĕр майлă пулсан:—вăрлăх яровизациленсе çитнĕ, анчах ăна акмалли вырăн хатĕр мар пулсан, вăрлăха кĕреçесемпе сăвăрса кушăхтарас пулать, веялкăсем витĕр те кăларма юрать.

Д. Сикстель.

Чăвашсен ялхуçалăх институчĕ.

Ют çĕршывсенче

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсем 8-мĕш арми тытса илнĕ позицисене вăйлăн тапăннă. Тăшманăн контратакисене пурне те сиресире пăрахнă, тăшман пысăк çухатусем тӳссе çурçĕр еннелле чакса пырать. Ĕнер кăнтăрла 8-мĕш арми Эль-Гетар патĕнче çапăçакан Америка войскисемпе çыхăннă.

Фронтăн çурçĕр участокĕнче англичансен пĕрремĕш армийĕ Меджез-Эль-Баб тата Мюншар районĕнче ăнăçлăн атака пуçласа янă. Тыткăна илнĕ тата чылай пысăк территори тытса илнĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, фронтăн вăтам участокĕнче Америка чаçĕсем Макнассирен 8 километр çурçĕререхри Джебель-Майзила районне нимĕçсенчен тасатнă. Çак операципе Сиди-Бузида хушшинчи паллă çула уçнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ВĂТАÇĔР ТИНĔС БАССЕЙНĔНЧЕ ТУНĂ ĔÇСЕМ

ЛОНДОН, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, разведка тăвас шутпа ӳкерсе илнĕ фотоӳкерчĕксем çакна кăтартса параççĕ: апрелĕн 5-мĕшĕнче Тунисри тата Сицили утравĕнчи аэродромсем çине вĕçсе пырса тапăннă вăхăтра тăшманăн 150 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ.

Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 7-мĕшĕнче союзниксен бомбардировщикĕсем Неаполе тата Мессинăна атакăланă. Нумай çĕрте пушарсем тухнă тата взрывсем пулнă.

ФРАНЦИРЕ АНГЛИПЕ АМЕРИКА ГРАЖДАНĔСЕНЕ АРЕСТЛЕНĔ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: мартăн 26-мĕшĕнче гитлеровецсен приказĕ тăрăх, Франци полицийĕ Францире пурăнакан американецсемпе англичансене 3.600 çынна арестленĕ.

КĔСКЕН

Норвегири Тронхейм портĕнче тăракан нимĕç транспорчĕ çине бомба пăрахнă. Карапа вăйлăн сиенленĕ.

Норвеги патриочĕсем нимĕçсен Киркенес патĕнчи 4000 салтак вырнаçнă çар лагерьне çунтарса янă. 52 çуртран 49-шĕ пĕтĕмпех çунса кайнă.

Пĕлтерӳ

1943 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн Парткабинетĕнче (Чувашская ур., 6) Сталин юлташăн 1943 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнчи приказне вĕренмелли 3-мĕш темăпа— «Нимĕç войскисем поражени тӳсни тата Хĕрлĕ Çар ăнăçусем тунин сăлтавĕсем» темăпа пропагандистсен семинарĕ пулать.

Семинара ВКП(б) Горкомĕн лекторĕ **Шапиро** юлташ ирттерет.

ВКП(б) Горкомĕн Парткабинечĕ.

Чăваш театрĕ 25 çул тултарчĕ

Çак кунсенче, апрелĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа 20-шне çитиччен, чăваш халăхĕ хăйĕн театрĕ 25 çул тултарнине чысласа уявлать.

Хаваслă уяв. Чăваш халăхĕн Ленинпа Сталин саманинче палкаланса саралма тытăннă ăсталăхĕн, мĕнпур чăваш культурин ку таранчченхи çитĕнĕвне палăртса паракан уяв.

Ĕмĕр хыççăн ĕмĕр иртнĕ, пĕр самана теприпе улшăннă. Чăваш ăсталăхĕшĕн, чăваш культуришĕн ирĕк кунçул пулман.

Чăваш сăмахĕ çуначĕсене сыхса лартнă кайăк пек пулнă, вăхăт иртнĕçемĕн хăватлăланса, çӳлĕрен çӳлерех çĕкленме май пулман унăн.

Сăмахпа калайманнине халăх юрăра, кĕсле купăспа кĕвĕлесе пама тăрăшнă. Анчах чăваш юрри пусмăрти халăх юрри пулнă. Чăваш театрĕ, чăваш опери, чăваш балечĕ — вĕсен пуласлăхĕ пӳлĕнсе тăнă.

Куçа курăнан илеме чăваш хĕрарăмĕ шурă пир çине куçарнă, каскалакансем килçурт таврашне, савăтсапана эрешленĕ, — чăваш халăхĕн картина çырас ăсталăхĕн, скульптура, архитектура генийĕн çакăнта çырлахмалла пулнă.

Революцин пуçламĕш çулĕсенче пурăнса иртнĕ чăвашсен аслă поэчĕ Çеçпĕл Мишши çапла çырса хăварнă: «Ку таранччен чăваш чĕлхийĕ илтĕнмен, — малашне чăваш юрри илтĕнĕ; чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси вырăнне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивĕч пулĕ... Чăваш сăмахĕ кăвар пулĕ, хĕрнĕ хурçă пулĕ».

Аслă Октябрь чăваш сăмахне асапран хăтарса ăмăрткайăк çуначĕсем пачĕ: вăйлă пул, хăватлă пул, çутă хĕвеле çити хăпар!

Аслă Октябрь чăваш халăхĕн пултару вăй-хăватне, ăсталăх генине çĕклерĕ, хавхалантарчĕ. Революци пуçлансанах чăвашăн поэзи, театр, музыка, картина çырас ăсталăх, ытти ăсталăхсем ирĕклĕн аталанма, ӳсме тытăнчĕç. Халĕ, революци пулнăранпа 25 çул ытларах иртнĕ хыççăн, чăваш халăхĕ хăй ăсталăхĕн çитĕнĕвĕсене чысласа тивĕçлипех хавасланма, уявлама пултарать.

Паян — театр уявĕ. Çавăнпа сăмах-юмах театр çинчен, унăн иртнĕ кунçулĕ, унăн ĕçĕ, унăн малашлăхĕ çинчен пултăр.

Ăсталăх — йывăр ĕç, унăн çитĕнĕвĕсем кĕске вăхăтрах палăраймаççĕ. Чăваш театрĕн кĕске историне аса илнĕ май, кун çинчен манма юрамасть.

Театр пурăнма пуçласси пьесăсем, сцена çинче ĕçлеме пултаракансем пуррипе çуккинчен килет. Революцин малтанхи уйăхĕсенче чăвашсен пьесăсем те, артистсем те пулман. Анчах театр пулмаллах пулнă: халăх ăна ыйтнă, вăл кирлĕ пулнă. Чăвашла çырнă пьесăсем çук — вырăс, ытти халăхсен пьесисене куçарас; артистсем çук, анчах театра юратакансем пур, сцена çинче выляканसене çавсенчен суйласа илес,—тенĕ театра пуçласа яракансем. Часах А. Н. Островскин «Не так живи, как хочется» ятлă пьесине куçарнă та çак пьесăна тĕрлĕ шкулсенче вĕренекен çамрăксен ушкăнĕ сцена çинче выляса панă. Çак ĕç Хусанта 1918 çулхи январĕн 27-мĕшĕнче И. Ст. Максимов-Кошкинский студент ертсе пынипе пулса иртнĕ. Çак кунтан чăваш театрĕ пурăнма пуçланă, унăн ĕçĕ аталанма тытăннă.

Театр Хусанта 1920 çулти кĕркуннеччен ĕçленĕ. Хусанта ĕçленĕ тапхăрта театрта пуçĕпех сцена çинчи ĕçе парăннă çынсем, чăваш драматургĕсем палăрса тухнă, театрăн вырăсларан куçарнă пьесăсем чылаях пулнă. Çак çулсенче театр Хĕрлĕ Çарти чăвашсем хушшинче нумай ĕçленĕ.

Шупашкара куçнă хыççăн (1920 ç. кĕркунне) театр пурнăçĕнче асăнма тивĕç улшăнусем пулса пыраççĕ. Вăл ĕнтĕ куçарнă пьесăсене çеç мар, чăвашла çырнă пьесăсене те часчасах кăтартма пуçлать. Чăваш театрне пула чăваш драматургийĕ ӳсет, ӳссе пыракан драматурги театрăн тĕп никĕсне çирĕплетет. Çапла вара, пирĕн театр чĕлхе тĕлĕшпе кăна мар, пурнăçа сцена çинче сăнласа парас енĕпе те чăвашсен нациллĕ совет театрĕ пулса тăрас çул çине тухать. 1927 çулта театрта ĕçлеме пултаракансене вĕрентсе хатĕрлес ĕç пуçланать. Хăйсем тĕллĕн театр ăсталăхне пуçăннă юлташсен йышне театр студийĕнче, унтан вара театр шкулĕнче вĕренсе тухнă çамрăксем хутшăнаççĕ. Режиссерсем, сцена ăстаçĕсем çитĕнсе пыраççĕ. Анчах, çак ырă улшăнусем пулса пынă вăхăтрах, театр ĕçĕнче йывăрлăхсем те сахалах пулман. Вăл йывăрлăхсенчен пысăкраххи — театр ăсталăхне ӳстерес тĕлĕшпе çирĕп ертсе пыракан пулманни.

1932—33 çулсенче ку енчен те ĕç ăнăçлă пыма пуçлать. Çак вăхăтра театрта Г. В. Парнэ ĕçлеме тытăннине уйрăмăнах палăртас килет. Вăл хатĕрлесе лартнă спектакльсем («Айдар» тата ыт.) театр чăн-чăн ăсталăх патнелле пыма тытăннине кăтартаççĕ. Тата 4—5 çул иртсен пирĕн артистсем, вĕсене ертсе пыракансем вырăс халăхĕ ӳстернĕ театр ăсталăхне, К. С. Станиславский вĕрентнине тĕпчеме пуçлаççĕ. Унтан çĕнĕ режиссерсем, Мускаври театр институтĕнче вĕренсе тухнă чăваш çамрăкĕсем (К. Иванов, Л. Родионов) килеççĕ. Театрăн пултару çулĕ анлăланса, уçăлса пырать.

Театрăн пархатарлă çулйĕрне куç умне тăратса, вăл пысăк ăсталăхпа тунă спектакльсене асăнма та май пур ĕнтĕ паян. А. Корнейчукăн «Платон Кречет», Ф. Павловăн «Ялта», П. Осиповăн «Айдар», М. Горькийĕн «На дне», А. Островскин «Василиса Мелентьева», А. Кăлганпа В. Алагерăн «Нарспи», С. Эльгер поэми тăрăх çырнă «Чакка», Я. Ухсайăн «Тутимĕр» т. ыт. пьесисене те чăваш театрĕ чăнах та ăста, тĕплĕн кăтартса панă. Çак спектакльсем чăваш театрĕн ӳсĕмне, унăн пултару вăйне чиперех кăтартаççĕ.

Тăван çĕршывăмăр хаяр та тискер тăшманпа — юнĕçен фашистсемпе кĕрешнĕ кунсенче чăваш театрĕ çĕнĕ спектакльсем, тăван халăха харсăр ĕçлеме, тăшмана парăнми кĕрешме чĕнекен спектакльсем лартса пачĕ. Вĕсенчен уйрăмăнах Мдивани çырнă «Фронта панă приказ» ятлă пьеса тăрăх тунă спектакле асăнас пулать. Çапах та, ку тĕлĕшрен театр мĕн тумаллине тăвайман-ха. Театра çак ĕçе пурнăçлама драматургсен те çине тăрсах пулăшмалла.

Юлашки 5—6 çул хушши Шупашкарта чăваш театрĕпе çумма-çуммăн вырăс театрĕ ĕçлет. Ку театр та пирĕн республикăри пурнăçра паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл лартса панă «Кремлевские куранты», «Парень из нашего города», «В степях Украины» тата ытти спектакльсем ăсталăх енчен те, халăх кăмăлне хĕçпăшаллантарас енчен те паха. Юбилее хатĕрленнĕ май, вырăс театрĕ П. Осипов çырнă «Айдар» пьесăна кăтартма хатĕрленет. Ку ĕç чăваш театрĕпе вырăс театрĕн ĕçри туслăхне татах çирĕплетмелле, тăван халăхсене чăваш драматургийĕн çитĕнĕвĕпе паллаштарма пулăшмалла.

25 çул тултарнă тĕле пирĕн театр хăйĕн сцени çинче халăх кăмăлне каякан, халăх савса тăракан артистсене пахха ӳстерчĕ. РСФСР-ĕн тава тивĕçлĕ артистне, Чăваш АССР халăх артистне Б. А. Алексеева, Чăваш АССР-ĕн тава тивĕçлĕ артисчĕсене О. И. Ырземе, И. О. Молодова, К. Е. Егорова, Б. И. Праудина, М. Ст. Бурмистрова, А. К. Ургалкина, Л. Ф. Семенова, Т. Н. Петровăна, М. М. Тихоновăна, Э. А. Кронберга, Чăваш АССР-ĕн искусствисенче ĕçлесе тава тивĕçлĕ пулнă юлташсене П. Н. Осипова, Е. А. Токмакова, Н. С. Айзмана тата А. Я. Григорова, М. П. Аленцев артистсене республика лайăх пĕлет, вĕсен ĕçне юратать. Çак асăннă юлташсем, театрта ĕçлекенсем пурте малашне татах та ăнăçлăрах ĕçлессе халăх шанса тăрать.

Театрăн çитĕнĕвĕсем пирĕн халăха хаваслантараççĕ. Анчах паянхи уяв—хаваслăх уявĕ кăна мар, вăл халăхăн хаярлăхне татах та чăмăртакан, татах та çивĕчлентерекен уяв.

Пирĕн çĕр çине ултавлăн тапăннă сĕмсĕр те тискер тăшман Совет Союзĕнчи халăхсен çулран-çул ӳстерсе пынă культурине çĕмĕрессшĕн, пĕтерсе лартасшăн, çулран-çул пухса пынă пуянлăхне çаратасшăн, ирĕк халăхсене чура туса хурасшăн. Çав ирсĕр тăшмана хирĕç чăваш халăхĕ, мĕнпур совет çĕршывĕнчи халăхсемпе пĕрле тăрса, паттăррăн çапăçса пырать. Хамăр ăсталăхшăн, культурăшăн, ирĕк чĕлхешĕн, ирĕк ĕçшĕн, мĕнпур аслă тăван çĕршывшăн чăваш халăхĕн ывăлĕсем хăйсен пуçĕсене хураççĕ.

Паян, чăваш совет культурин паллă уявĕн кунĕ, мĕнпур чăваш халăхĕ хăйĕн вăй-халне татах та çирĕплетет, тăшмана çĕмĕрсе пăрахмашкăн хăйĕн хаярлăхне татах та чăмăртать.

Паян-кун пыракан аслă вăрçăра—театр искусстви те хĕçпăшал пулса тăрать. Çак хĕçпăшал халиччехинчен вăйлăрах, хăватлăрах пултăр — çапла хушать халăх.

А. КĂЛГАН,
Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи искусство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

ИТ 137 Типография № 1, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.